26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
22
ЫТЛАРИКУН
37 (6532) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ тӗле ВКП(б) Центральный Комитечӗ ЧӖНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе ирӗклӗхӗшӗн тата никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешекен ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар сывӑ пултӑр!

Хӗрлӗ Ҫар ҫирӗм ултӑ ҫул тултарнине тӑшмана хирӗҫ кӗрешсе ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе паллӑ тӑвар! Хамӑрӑн Тӑван Совет ҫӗршывне ҫӗнӗрен чапа кӑларар!

2. Фашистла нимӗҫ ирсӗрӗсене хамӑр Тӑван ҫӗршыв талккишӗсенчен ӑнӑҫлӑн хӑваласа кӑларакан аслӑ совет халӑхӗ, унӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ сывӑ пулччӑр!

Пӗтӗм вӑя — тӑшмана тӗппипех аркатса тӑкма! Хамӑрӑн совет, халӑх ялавӗ пирӗн халӑха ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне илсе пытӑр!

3. Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене, Европа халӑхӗсен юнлӑ пусмӑрҫисене, ирӗклӗхе юратакан пӗтӗм тӗнчери халӑхсен ылханлӑ тӑшманӗсене—вилӗм!

4. Совет Ҫӗршывӗшӗн Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен ывӑлӗсем ҫапӑҫава кӗреҫҫӗ.

Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫар — ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑхӗпе туслӑхӗн ҫарӗ!

5. Этемлӗхӗн чи усал тӑшманӗсене — фашистла нимӗҫ пусмӑрҫисене Совет Союзӗпе Англин тата Америкӑн боевой союзӗ ҫӗнтересси сывӑ пултӑр! Ирӗклӗхе юратакан халӑхсен мӗнпур вӑйӗсемпе ҫапӑҫури вӑйхӑватне гитлерла Германие хӑвӑртрах аркатса тӑкнӑ ҫӗре парар!

6. Югославин хаюлла патриочӗсем! Эсир хӑварӑн Тӑван ҫӗршывӑр ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешни Европӑри пусмӑрлӑха кӗрсе ӳкнӗ мӗнпур халӑхсене хавхалантаракан тӗслӗх пулса тӑрать.

Фашистла захватчиксене хирӗҫ пурнӑҫа шеллемесӗр кӗрешекен Югославин паттӑр халӑхӗ тата унӑн халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен хастар ҫарӗ сывӑ пултӑр!

7. Гитлерла империализма хирӗҫ кӗрешекен Европӑри халӑхсене салам! Польша, Чехословаки, Францин, Греци, Норвеги, Бельги, Голланди, Дани патриочӗсем! Хӑвӑра фашистла пусмӑрлӑхран ирӗке кӑларассишӗн хӗҫпӑшаллӑ кӗрешӗве ҫӗкленӗр! Гитлерла тиранис сирпӗтсе антарӑр!

8. Пусмӑрлӑха кӗрсе ӳкнӗ тӑван славянсем! Славян халӑхӗсен вилӗмлӗ тӑшманӗсене тата славян халӑхӗсен пусмӑрҫисене — нимӗҫсене хирӗҫ пыракан хаяр кӗрешӗвӗн ҫулӑмне анлӑнрах чӗртсе ярӑр! Славян халӑхӗсен гитлерла империалистсене хирӗҫ пыракан хӗҫпӑшаллӑ кӗрешӗвӗ сывӑ пултӑр! Славян халӑхӗсен ҫапӑҫури пӗрлӗхӗ сывӑ пултӑр!

9. Фашистла Германин пурнӑҫ центрӗсене пыра-пыра ҫапакан Англипе Америка авиацийӗн паттӑр летчикӗсене салам! Фашистла пиратсене хирӗҫ кӗрешекен Великобританипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен хаюллӑ морякӗсене салам!

10. Пирӗн пӗрлехи тӑшмана — фашистла пусмӑрҫӑсене хирӗҫ Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче геройла ҫапӑҫакан Польшӑн пӗрремӗш корпусӗн, Чехословакин ҫар соединенийӗсен, Югославин ССР Союзӗнчи ҫар чаҫӗн салтакӗсемпе офицерӗсене, Францин «Нормандия» ятлӑ авиаци чаҫӗн летчикӗсене боевой салам!

11. Пирӗн хуласемпе ялсене ҫаратса тата аркатса пӗтернӗшӗн, совет ҫыннисене вӗлернӗшӗн, вӗсене нимӗҫ чуралӑхне илсе кайнӑшӑн, хӗрарӑмсемпе ачасенчен мӑшкӑлланӑшӑн фашистла нимӗҫ ирсӗрӗсене хаяррӑн тавӑрар! Нимӗҫсене вӗсем тунӑ мӗнпур тискер ӗҫсемшӗн тавӑрас сехет ҫывӑх!

Нимӗҫ ирсӗрӗсене вилӗм!

12. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем! Сире, ирӗке кӑларакансене, нимӗҫсен фашистла пусмӑрӗ айӗнче асапланакан миллионшар совет ҫыннисем кӗтеҫҫӗ. Тӑшмана хытӑрах ҫӗмӗрӗр, нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене пӗтерсе тӑкӑр! Малалла, Хӗвеланӑҫнелле! Ирсӗр захватчиксене Совет ҫӗрӗ ҫинчен шӑлса ывӑтар!

13. Хӗрлӗ Ҫарӑн пехотинецӗсем! Наступленин ӑнӑҫлӑхне хӑвӑрттӑн ӳстерсе пырӑр, тӑшман ҫарӗсене пӗр чарӑнмасӑр йӗрлесе пырса пӗтере-пӗтере тӑкӑр, вӗсене ҫӗнӗ рубежсенче ҫирӗпленсе ларма ан парӑр, хамӑрӑн хӗвеланӑҫӗнчи чикӗсем патнелле хӑвӑрттӑн куҫса пырӑр! Нимӗҫ захватчикӗсене ҫавӑрса иле-иле пӗтерсе тӑкӑр, тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине тыта-тыта илӗр!

Сывӑ пулччар совет пехотинецӗсем!

14. Хӗрлӗ Ҫарӑн танкисчӗсем! Тӑшмана хаюллӑн аркатса, пӗр чарӑнмасӑр йӗрлесе хӑваласа пырӑр, ӑста маневр туса тӑшман ҫарӗсем чакмалли ҫулсене татӑр, нимӗҫ захватчикӗсене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет танкисчӗсем!

15. Хӗрлӗ Ҫарӑн артиллерисчӗсемпе минометчикӗсем! Хӑватлӑ вут-ҫулӑм тӑкса, тӑшман укреплениййӗсене, унӑн хирӗҫ тӑмалли узелӗсене, тӗреклетнӗ пункчӗсене ҫӗмӗрӗр! Хамӑрӑн наступлени туса пыракан ҫарсене ҫул уҫса парӑр, тӑшманӑн огневой точкисене пусара-пусара лартӑр, танкӗсемпе артиллерине пӗтере-пӗтере тӑкӑр, чӗрӗ вӑйне вӗлере-вӗлере пӗтерӗр!

Сывӑ пулччӑр совет артиллерисчӗсемпе минометчикӗсем!

16. Совет летчикӗсем — пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн соколӗсем! Тӑшмана сывлӑшра та, ҫӗр ҫинче те, тинӗсре те пӗр шеллемесӗр ҫӗмӗрсе пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет летчикӗсем!

17. Тинӗс-Ҫар Флочӗн краснофлотецӗсемпе командирӗсем! Тӑшмана вӑйлӑнрах пыра-пыра ҫапӑр! Тӑшманӑн карапӗсемпе транспорчӗсене пӗтере-пӗтере тӑкӑр! Хӗрлӗ Ҫара наступлениллӗ операцисем ӑнӑҫлӑн тума пулӑшӑр! Гитлерла вӑрӑ-хурахсене пӗр шеллемесӗр вӗлере-вӗлере пӗтерӗр!

Сывӑ пулччӑр совет морякӗсем!

18. Хӗрлӗ Ҫарӑн кавалерисчӗсем! Тӑшман ҫарӗсене ывӑнма пӗлмесӗр йӗрлесе хӑваласа пырӑр, тӑшман ҫарӗсенречӗсене хаюллӑн та татӑклӑн ҫӗмӗре-ҫӗмӗре кӗрӗр, тӑшмана флангсенчен ҫавӑра-ҫавӑра илӗр, тӑшман тылӗнче хаюллӑ рейдсем тӑвӑр, фашистла нимӗҫ ҫӗлен-калтисене пӗр шеллемесӗр пӗтере-пӗтере тӑкӑр!

Сывӑ пулччӑр совет юланутҫисем!

19. Хӗрлӗ Ҫарӑн разведчикӗсем! Тӑшманӑн ӗмӗчӗсемпе шухӑшӗсене вӑхӑтра та ӑстан туйса илӗр! Тӑшман вырнаҫнӑ ҫӗре хаюллӑн кӗре-кӗре кайӑр, вӑл хӑйӗн вӑйӗсене ӑҫта урӑхлатса йӗркеленине вӑхӑтра тупса палӑртӑр. Пирӗн наступлени тӑвакан ҫарсене тӑшмана ӑнӑҫлӑн ҫӗмӗрме пулӑшӑр!

Сывӑ пулччӑр хаюллӑ совет разведчикӗсем!

20. Хӗрлӗ Ҫарӑн автоматчикӗсем! Фашистла нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене хӑватлӑнрах пыра-пыра ҫапӑр! Тӑшмана хаюллӑн та кӗтмен ҫӗртен пыра-пыра тапӑнӑр. Автоматсенчен тӑшман ҫине вилӗм вучӗ тӑкӑр!

Сывӑ пулччӑр совет автоматчикӗсем!

21. Хӗрлӗ Ҫарӑн связисчӗсем! Лайӑх ҫыхӑну — тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫре питех те кирлӗ услови пулса тӑнине асра тытӑр. Хӗрлӗ Ҫарти ҫыхӑну ӗҫне мӗнпур майсемпе лайӑхлатса пырӑр, Хӗрлӗ Ҫара ӑнӑҫлӑ наступлениллӗ операцисем тума пулӑшӑр!

Сывӑ пулччӑр совет связисчӗсем!

22. Инженерла ҫарсен боецӗсемпе командирӗсем! Пирӗн наступлени туса пыракан ҫарсене шывсем, мина хирӗсем урлӑ каҫма, наступлени ӑнӑҫӑвӗсене ҫирӗплетсе, малалла аталантарса пыма пӗтӗм вӑйпа тата мӗнпур майсемпе пулӑшса тӑрӑр!

Сывӑ пулччӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн инженерла чаҫӗсем! Сывӑ пулччӑр пирӗн мухтавлӑ саперсемпе минерсем!

23. Сывӑ пулччӑр пирӗн мухтавлӑ пограничниксем, совет ҫӗршывӗн чиккисене шанчӑклӑн хӳтӗлекенсем!

24. Сывлӑшран тапӑннине хирӗҫ кӗрешекен ҫарсен боецӗсемпе командирӗсем! Пирӗн хуласене, промышленноҫа, транспорта тата Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсене тӑшман сывлӑшран тапӑнассинчен тимлӗн хӳтӗлесе тӑрӑр! Тӑшманӑн шухӑшӗсене вӑхӑтра туйса илӗр те вӗсене путлантарса лартӑр! Фашистла тапӑнуҫӑсене пӗтере-пӗтере пырӑр!

25. Хӗрлӗ Ҫарӑн медицина работникӗсем! Врачсем, фельдшерсем, медсестрасем, санитарсемпе санитаркӑсем! Аманнӑ совет воинӗсен пурнӑҫне ҫӑлса хӑварассишӗн тата вӗсене строя тавӑрассишӗн вӑя шеллемесӗр кӗрешӗр!

Сывӑ пулччӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн медицина работникӗсем!

26. Ҫар тылӗнчи работниксем! Действующи Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсене хӗҫпӑшал, ҫар хатӗрӗ тата апатҫимӗҫ вӑхӑтра та йӗркеллӗ парса тӑрӑр, хамӑрӑн ҫарсене наступлени тума пулӑшӑр!

Сывӑ пулччӑр ҫар тылӗнчи работниксем!

27. Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗн гвардеецӗсем! Гвардин мухтавлӑ Ялавӗсене малаллах чыслӑн йӑтса пырӑр! Наступленире паттӑрлӑхпа хаюлӑхӑн, дисциплинӑллӑ тата ҫирӗп пулнин, тӑшмана вӑйлӑн та хӑвӑрт хӗссе пынин тӗслӗхне кӑтартса парӑр!

Сывӑ пултӑр совет Гвардийӗ!

28. Пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсене — Совет Союзӗн Геройӗсемпе Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗсене мухтав!

29. Ленинград фрончӗн ҫарӗсене, Ленинграда хӳтӗлесе тӑнӑскерсене тата ӑна тӑшман блокадинчен тӗппипех ирӗке кӑларнӑскерсене, салам!

30. Тӑшманӑн Днепр тӑрӑхӗнчи оборонине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ тата Днепр шывӗн сылтӑм енчи Украинӑпа Белоруссие тӑшмантан ӑнӑҫлӑн ирӗке кӑларса пыракан Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсене чыс та мухтав!

Совет ҫӗрне тӑшмантан тӗпӗ-йӗрӗпех тасатса ҫитерессишӗн — малалла!

31. Тӑвансем! Фашистла нимӗҫ захватчикӗсен пусмӑрӗ айне вӑхӑтлӑха кӗрсе ӳкнӗ вырӑссем, украинецсем, белоруссем, молдавансем, литовецсем, латышсем, эстонецсем, карелсем! Эсир ирӗке тухас сехет ҫывхарса килет! Пӗтӗм халӑхӑн партизанла юхӑмне сарса ярӑр! Нимӗҫ мерзавецӗсене пӗтерсе пырӑр! Наступлени тӑвакан Хӗрлӗ Ҫара мӗнпур вӑйпа пулӑшса тӑрӑр!

32. Паттӑр партизансемпе партизанкӑсем! Наступлени тӑвакан Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине пур майсемпе те вӑйлатса пырӑр, тӑшман тылӗсемпе штабӗсене аркатӑр, совет ҫыннисене нимӗҫсем пӗтерсе тӑкассинчен тата вӗсене Германи каторгине хӑваласа каяссинчен хӑтарӑр, фашистла нимӗҫ ирсӗрӗсене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет партизанӗсемпе партизанкисем!

33. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем! Фронтовиксен ҫемьисемшӗн тӑрӑшни — мӗнпур совет патриочӗсен чыслӑ ӗҫӗ пулса тӑрать. Тӑван ҫӗршыва ирӗке кӑларакансен ҫемьисемшӗн пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшар!

34. ССР Союзӗнчи гражданинсемпе гражданкӑсене пурне те ҫар ӗҫне вӗрентни — пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн ҫапӑҫури вӑй-хӑватне тӗреклетет. Совет патриочӗсемпе патриоткисем! Ҫар ӗҫне ҫине тӑрса вӗренӗр! Тӑван ҫӗршыва пултаруллӑн та паттӑррӑн хӳтӗлекенсем пулма хатӗрленӗр!

35. Хамӑрӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫара, хамӑрӑн мухтавлӑ Хӗрлӗ Флота пулӑшма пӗтӗм вӑя парар! Халӑхӑн пӗтӗм вӑйне — тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма! Хамӑр ҫӗнтерессишӗн — малалла!

36. Рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Фронта пулӑшас тесе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлӗр! Наступлени тӑвакан Хӗрлӗ Ҫара танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем, автоматсем, винтовкӑсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса тӑрӑр, ҫар продукцийӗн пахалӑхне лайӑхлатса пырӑр!

37. Совет чугун ҫулӗн работникӗсем! Вӑя шеллемесӗр тата тӗрӗс ӗҫлесе, Хӗрлӗ Ҫара ӑнӑҫлӑ наступлени тума пулӑшӑр! Войскӑсем, ҫар тата халӑх хуҫалӑхӗн грузӗсене турттарса тӑракан поездсене хӑвӑрт ҫӳретес ӗҫе организацилӗр! Чугун ҫулсем ҫинче ҫар дисциплинине пӗр ывӑнмасӑр тӗреклетсе пырӑр! Нимӗҫсем аркатнӑ чугун ҫулсен линийӗсене, кӗперсемпе ҫурт-йӗрсене, шыв парса тӑрас ӗҫпе ҫыхӑнава хӑвӑртрах юсаса йӗркелӗр!

38. Колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе колхозсенчи рабочисемпе работницӑсем! Ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрленсе тата ӑна ӑнӑҫлӑн туса ирттерсе, 1944 ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илӗр! Фронтпа ҫӗршыва — апат-ҫимӗҫ, промышленность валли — чӗртавар ытларах та ытларах парар!

39. Тӑшмантан ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисем! Гитлерла вӑрӑ-хурахсем аркатнӑ хуласемпе ялсене, промышленноҫа, транспорта, ялхуҫалӑхне тата культура учрежденийӗсене хӑвӑртрах юсаса йӗркелӗр! Наступлени тӑвакан Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине мӗнпур майсемпе вӑйлатса пырӑр!

40. Совет интеллигенцийӗ! Совет учрежденийӗсен работникӗсем, инженерсем, учительсем, агрономсем, врачсем, наука тата искусствӑпа литература работникӗсем! Рабочисемпе колхозниксене хамӑр халӑх хуҫалӑхне малалла ҫӗклеме пулӑшӑр, совет наукипе культурине малалла аталантарса пырӑр!

41. Совет хӗрарӑмӗсем! Производство специальноҫӗсене вӗренсе алла илӗр, ӗҫ тухӑҫлӑхне ывӑнма пӗлмесӗр ӳстерсе пырӑр! Сывлӑшран тапӑнассинчен тата химиллӗ тапӑнуран хӳтӗленес ӗҫе, санитарипе ҫыхӑну ӗҫне вӗренӗр! Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешме хамӑрӑн пӗтӗм вӑя парар!

42. Совет ҫамрӑкӗсем! Фронта пулӑшас тӗлӗшпе вӑя шеллемесӗр ӗҫлӗр, производство техникине вӗренсе алла илӗр, ӗҫ дисциплинин тӗслӗхне кӑтартӑр, ҫар ӗҫне ывӑнма пӗлмесӗр вӗренӗр!

43. Коммунистсемпе комсомолецсем! Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешекенсен малти речӗсенче пулӑр!

44. Сывӑ пултӑр Совет халӑхӗ, халӑх-герой, халӑх-воин!

45. Сывӑ пултӑр хӑватлӑ Совет Союзӗ, пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхӗн, телейлӗхӗн тата мухтавлӑхӗн шанчӑклӑ тӗрекӗ!

46. Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ, Ленин—Сталин партийӗ, — фашистла нимӗҫ захватчикӗсене ҫӗнтерессишӗн пыракан пӗтӗм халӑх кӗрешӗвне хавхалантарса, организацилесе пыраканӗ.

47. Ленин ялавӗпе, Сталин ертсе пынипе, нимӗҫ оккупанчӗсене пӗтӗмпех ҫӗмӗрсе тӑкассишӗн тата вӗсене хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывран хӑваласа кӑларассишӗн — малалла!

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ

Ленинград тата Волхов фрончӗсен ҫарӗсем уйӑх хушшинче тунӑ наступленин итогӗсем

Ленинград фрончӗн ҫарӗсем январӗн пӗррремӗш ҫуринче ЛЕНИНГРАД хулине хупӑрласа тӑнӑ фашистла нимӗҫ ҫарӗсене хирӗҫ наступлени пуҫласа янӑ, ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах Волхов фрончӗн ҫарӗсем НОВГОРОД хули енчелле наступлени пуҫласа янӑ.

Ленинград фрончӗн ҫарӗсем, ПУЛКОВО районӗпе ОРАНИЕНБАУМРАН кӑнтӑртарахри районран пыра-пыра ҫапса, нимӗҫсен ЛЕНИНГРАДРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ, шала инҫене каякан, нумай вӑхӑта тунӑ оборонине татса кӗнӗ. Ҫав вӑхӑтрах Волхов фрончӗн ҫарӗсем, ВОЛХОВ шывӗ урлӑ тата ИЛЬМЕНЬ кӳллин тури пайӗ урлӑ каҫса, нимӗҫсен НОВГОРОДРАН ҫурҫӗртерехри тата кӑнтӑртарахри вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ, нумай вӑхӑта тунӑ оборонине ӑнӑҫлӑн татнӑ.

Пирӗн ҫарсем, ҫавӑрса илмелли маневрсем туса тата фронт енчен пыра-пыра ҫапса, наступленин малтанхи 5—6 кунӗ хушшинче нимӗҫсен оборонин ҫирӗплетнӗ тӗп пункчӗсене —КРАСНОЕ СЕЛО, РОПША тата НОВГОРОД хулисене туртса илнӗ, вӗсен гарнизонӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илсе пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе нимӗҫсен калама ҫук вӑйлӑ оборони ишӗлнӗ. Ҫав оборонӑна вӗсем хӑйсем никам пырса тӗкӗнейми, никам ҫӗнтерейми «ҫурҫӗрти вал» тесе, ЛЕНИНГРАДА хупӑрласа тӑракан «хурҫӑ унка» тесе хакланӑ.

Нимӗҫсен ҫӗмӗрсе тӑкнӑ чаҫӗсене хӑваласа пырса, пирӗн ҫарсем, пӗр чарӑнмасӑр наступлени туса пырса, тӑшмана ЛУГА шывӗ патне пымалли ҫулсем ҫинчи ҫирӗплетнӗ темиҫе рубежран хӗссе кӑларнӑ та ҫав юханшыв патне пырса ҫитнӗ. Унта нимӗҫсем малтанах туса хунӑ вӑйлӑ оборона рубежӗнче пирӗн наступление чарса лартма хӑтланнӑ. Анчах та пирӗн ҫарсем, хаюллӑ та пӗлсе ҫапӑҫса, ЛУГА шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ, нимӗҫсен ҫав шыв хӗррипчи позицийӗсене ЛУГА хули районӗнче татнӑ тата КИНГИСЕППА БАТЕЦКАЯРАН кӑнтӑртарахра вӗсенчен флангсемпе пырса иртсе кайнӑ.

Наступлени туса пырса, пирӗн ҫарсем пӗр уйӑх хушшинче 150—200 километр малалла кайнӑ, Фини заливӗн ҫыран хӗррине НАРВА шывӗн вӑрри таранах тата НАРВА шывӗпе ЧУДСКИ кӳлӗрен хӗвелтухӑҫнерехри пӗтӗм района тӑшмантан тасатнӑ, ҫапла вара СЕРЕДКА, СТРУГИ, КРАСНЫЕ, ПЛЮССА, УТОРГОШ, ШИМСК линийӗ патне пырса тухнӑ. Пирӗн ҫарсем ПЕТЕРГОФ, УРИЦК, РОПША, КРАСНОЕ СЕЛО, ПУШКИН, ПАВЛОВСК, ГАТЧИНА, МГА, ТОСНО, КИНГИСЕПП, ГДОВ, ЛУГА, ЛЮБАНЬ, ЧУДОВО, НОВГОРОД хулисене, Ленинград облаҫӗнчи ВОЛОСОВО, ОСЬМИНО, ЛЯДЫ, ПОЛНА, ПЛЮССА, ОРЕДЕЖ, БАТЕЦКАЯ, УТОРГОШ, ШИМСК ятлӑ район центрӗсене тата халӑх пурӑнакан ытти 4.000 пункта яхӑн ирӗке кӑларнӑ.

ЛЕНИНГРАДА Мускавпа ҫыхӑнтарса тӑракан чи кирлӗ чугун ҫула — ОКТЯБРЬСКИ чугун ҫула, ҫавӑн пекех тата ЛЕНИНГРАД — ВОЛОГДА, ЛЕНИНГРАД—МГА—РЫБИНСК, ЛЕНИНГРАД — НОВГОРОД, ЛЕНИНГРАД — БАТЕЦКАЯ, ЛЕНИНГРАД — ЛУГА, ЛЕНИНГРАД — ОРАНИЕНБАУМ — ВЕЙМАРН, ЛЕНИНГРАД — КИНГИСЕПП, ВЕЙМАРН—ГДОВ, ГАТЧИНА — ТОСНО чугун ҫулӗсене ирӗке кӑларнӑ. Уйӑх хушшинче нимӗҫсен 18-мӗш армийӗн тӗп вӑйӗсене — 11-мӗш, 21-мӗш, 24-мӗш, 58-мӗш, 61-мӗш, 121-мӗш, 126-мӗш, 170-мӗш, 212-мӗш, 215-мӗш, 225-мӗш, 227-мӗш, 290-мӗш пехотнӑй дивизийӗсене, 8-мӗшпе 28-мӗш ҫӑмӑл пехотнӑй дивизийӗсене, 1-мӗш, 9-мӗш, 10-мӗш, 12-мӗш, 13-мӗш авиаполевой дивизийӗсене, СС полици дивизине, Испани легионне, СС «Нидерланды», «Нордланд», «Фельдхернхалле» ятлӑ танково-гренадерски дивизийӗсене тата 12-мӗш танковӑй дивизине йывӑр ҫухатусем кӳнӗ. Нимӗҫ ҫарӗн главнӑй командованийӗн йывӑр артиллерийӗн пысӑк группировкине аркатса тӑкнӑ. Ҫав артиллери ЛЕНИНГРАД хулине персе тӑнӑ, унта 150 миллиметртан пуҫласа 406 миллиметра ҫити калибрлӑ 320 тупӑ пулнӑ.

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем—97, танксем—275, тупӑсем — 1.962, ҫав шутра 150 миллиметртан пуҫласа 406 миллиметра ҫити калибрлисем —102, минометсем—2.235, пулеметсем—3.642, автомашинӑсем — 4.278, тӗрлӗ складсем—460.

Тӑшманӑн 90.000 салтакпа офицер ытла вилсе пӗтнӗ.

Пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: танксем—189, тупӑсем—1.852, ҫав шутра 150 миллиметртан пуҫласа 406 миллиметра ҫити калибрлисем—178, минометсем —2.543, пулеметсем—4.660, винтовкӑсемпе автоматсем—42.000, тӗрлӗ снарядсем—пӗр миллион ытла, патронсем—17 миллион, автомашинӑсем —2.648, чугун ҫул вагонӗсем—615, ҫар пурлӑхӗн склачӗсем—353.

Нимӗҫсен 7.200 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Тӑшман ҫухатӑвӗсем тата пирӗн ҫарсем Корсунь-Шевченковский районӗнче ҫавӑрса илнӗ фашистла нимӗҫ ҫарӗсене пӗтернӗ чух тытса илнӗ трофейӑсем

Корсунь-Шевченковский районӗнче ҫавӑрса илнӗ фашистла нимӗҫ ҫарӗсене пӗтерешшӗн пынӑ ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче, кӑҫалхи февралӗн 3-мӗшӗнчен пуҫласа 18-мӗшне ҫитиччен, Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем тӑшмана ҫакӑн пек ҫухатсем кӳнӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем — 430, танксем — 155, тупӑсем — 376, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем — 59, минометсем — 269, пулеметсем—900.

Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 55.000 виллине тупнӑ. Ҫав вилесем хушшинче Корсунь-Шевченковский районӗнче ҫавӑрса илнӗ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнӗн командующийӗн—артиллери генералӗн Вильгельм ШТЕММЕРМАНАН виллине тупнӑ.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: самолетсем — 41, танксем — 116, бронемашинӑсем — 32, тупӑсем — 618, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем — 51, минометсем — 267, пулеметсем — 789, бронетранспортерсем — 85, автомашинӑсем — 10.000, паровозсем — 7, вагонсемпе цистернӑсем — 415, тягачсем — 127, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—4.050, лашасем—6.418, противогазсем—39.200, боеприпассемпе тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗн склачӗсем — 64.

Тӑшманӑн 18.200 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Арми генералне И. С. Конева ҫар званийӗ—Совет Союз Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Арми генералне Иван Степанович Конева ҫар званийӗ — Совет Союз Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 20-мӗшӗ.

Икшер норма тултараҫҫӗ

Макарон фабрикин коллективӗ (директорӗ Б. Столяров юлташ) паттӑр Хӗрлӗ Ҫар кунне производствӑри ҫӗнӗ ӳсӗмсемпе кӗтсе илессишӗн ӑмӑртса ӗҫлет. Январь уйӑхӗнчи задание 103 проц. пурнӑҫланӑ. Февраль уйӑхӗнчи плана 5 кун малтан пурнӑҫлама пулса, коллектив хӑй ҫине обязательство илнӗ. А. Денисова, М. Борисова стахановкӑсем кашни кунах задание икӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Столяр Гребнев юлташ юлашки кунсенче ӗҫ нормине 250 процент чухлӗ тултарса пырать.

Хӗрлӗ Ҫар кунӗ умӗнхи ӑмӑртура

КАНАШ. Горпромкомбинат коллективӗ (Управляющийӗ Шлапак юлташ) паттар Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ кун тӗлне 1-мӗш кварталта тракторсен запаслӑ пайӗсене тумалли задание 60 процент чухлӗ пурнӑҫлама пулнӑ. Халӗ коллектив ҫак обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫласа пырать. Февралӗн 15-мӗшӗ тӗлне тракторсен вентилятор ҫунаҫӗсене хытармалли пайӗсене 50 штука, вентилятор ҫунаҫӗсене 200 штука хатӗрленӗ. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах Васильев, Дегтярев, Крылов, Александров юлташсем аван ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен заданине ытлашшипех тултараҫҫӗ.

Горпромкомбинат коллективӗ ҫавӑн пекех ытти ӗҫсенче те паха тӗслӗхсем кӑтартать. Январь уйӑхӗнчи производство планне вӑл 111,2 процент пурнӑҫланӑ. Атӑ-пушмак ҫӗлекен тата ҫӑматӑ йӑвалакан цехсем уйӑхри задание 140 процента ҫити пурнӑҫларӗҫ.

Коллектив уйӑхри задание паттӑр Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне пурнӑҫлама тӑрӑшать

С. ШАДИН.

* * *

СӖНТӖРВӐРРИ, февралӗн 19-мӗшӗ. (Телефонпа). «Крестьянский кузнец» артелӗн рабочисем Хӗрлӗ Ҫарӑн фронтри ҫӗнтерӗвӗсене ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе ответлеҫҫӗ. «Ӗҫре палӑрнӑшӑн» медаль илнӗ тимӗрҫӗ И. Иванов юлташ кулленхи плана тӑтӑшах 400 процент, тимӗрҫӗ цехӗн бригадирӗ Я. Офицеров 361 процент, тимӗрҫӗ М. Красильников—360 процент тултараҫҫӗ.

Ф. ИЛЬИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЛУГА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра Ленинград облаçĕнчи ПЛЮССА район центрĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ытти 30 яла ытла йышăннă. Вĕсен шутĕнче — ПЕТРИЛОВО, БУТЫРКИ, ОКРИНО, КОТОРСКА, ЛЮБЕНСКОЕ, КРИЦА, СКИРИЦЫ, ДУБРОВА, АЛЕКСАНДРОВКА.

ИЛЬМЕНЬ кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — БОЛЬШОЕ ВОРОНОВО, НАГОВО, МУРАВЬЕВО, БОЛЬШОЕ ОРЕХОВО, ЗАБОЛОТЬЕ, ГРИГОРОВО, ДОЛЖИЦЫ, МОРИЛЬНИЦА, РЕЧНЫЕ КОТЦЫ, ПЕТРУХНОВО, ДОРОЖКИНО, ХАРИНО ялĕсем тата НАГОВСКАЯ, ТУЛЕБЛЯ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 47 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

ПИРĔН САМОЛЕТСЕМ ПСКОВ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПАННИ

Февралĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ Псков чугун çул узелне тапаннă. Çав узелта пухăнса тăнă нимĕç çарĕсен темиçе вунă эшелонĕ çине, çавăн пекех тата тăшманăн çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. 80 тĕлте пушар тухнă, вăйлă взрывсем пулнă. Тăшманăн сахалтан та 15 чугун çул эшелонĕ çуннă. Самолетсем каялла вĕçсе каяс умĕн чугун çул узелĕн пĕтĕм территорине талкăшпех вут хыпса илнĕ. Тата, унсăр пуçне, тăшманăн çар склачĕсен районĕнче тата аэродром территорийĕнче те вăйлă пушарсем тухнă, унта та вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн 3 самолет хăйсен базисене таврăнман.

ФЕВРАЛĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЛУГА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, ПОГОРЕЛОВО, ПОЛОСЫ, ЗАПИСЕНЬЕ ЗВЯГИНО, МИЛЮТИНО, ЗАПОЛЬЕ, БОЛЬШОЙ ЗВАД, МАЛЫЙ ЗВАД ялĕсене туртса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă, Ленинград облаçĕнче УТОРГОШ район центрĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата МЕДВЕДЬ, ВЫСОКОВО, ВАНЕЦ, ПЛОСКОВО, БРЯНСКАЯ, ДОНЕЦ, МИХАЛКИНО, МШАГА ВОСКРЕСЕНСКАЯ, СОСНИЦЫ, УГЛЫ ялĕсене йышăннă.

ИЛЬМЕНЬ кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — РЕТЛЕ, КОРОСТЕНЬ, БУРЕГИ, ПСИЖА, БАХМУТОВО, ГОРИЦЫ, СЕЛЬЦО, МИХАЛКОВО, ЧУДИНОВО, ЛИЧИНО, ШИЛОВА ГОРА, СВИСТУХА, ВЕРЕХНОВО ялĕсем тата ПЕРЕТЕРКИ, ПАРНИКИ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 10 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Луга хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Пĕр чаçри боецсем тăшмана пĕр ялтан çапса кăларнă чухне нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Каялла чакакан нимĕçсем 50 тупă, станковăй пулеметсем тата ытти хĕçпăшал нумай, пысăк обоз тата çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе вунă автомашина пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Новгород хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Ленинград облаçĕнчи Уторгош район центрĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ. Уторгошăн пынă çапăçура совет боецĕсем нимĕçсен икĕ полк пехотине аркатса тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем Шелонь шывĕ урлă каçнă та çав тери хăвăрт пырса çапса, гитлеровецсене темиçе ялтан хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли выртса юлнă. 22 тупă, 2 боеприпас склачĕ тата сапёрсен пурлăхĕн пĕр складне тытса илнĕ. Тепĕр районра пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен отряд тăшман тылне кĕрсе кайнă та гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ильмень кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, 100 ял ытла тата Перетерки, Парники чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем хăйсен техникипе хĕçпăшалне пăраха-пăраха хăвараççĕ. Тепĕр участокра нимĕç автоматчикĕсем, вăйлă çирĕплетнĕ оборона узелĕсемпе усă курса, пирĕн наступлени туса пыракан чаçсене чарма хăтланнă. Пирĕн чаçсене чарса, нимĕçсем хăйсен тĕп вăйĕсене йĕркене кĕртме май тупасшăн пулнă. Совет çарĕсем тăшман оборонин узелĕсенчен аякран иртсе кайнă та çаплах малалла куçса пынă. Çавăрса илнĕ нимĕç автоматчикĕсене, пĕтĕмпе 500 çын таран, çĕрле йăлтах пĕтерсе тăкнă. 9 противотанковăй тупă, 70 пулемет тата автоматсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансем 5 кун хушшинче 3.000 чугун çул рельсĕ, 5 кĕпер тата нимĕçсен çар хатĕрĕсемпе пыракан 140 автомашинине лавне пĕтерсе тăкнă. Засадĕсенчен персе тата хирĕç тăрса çапăçса, совет патриочĕсем гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Противотанковăй пăшалсемпе тата пулеметсемпе нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ. Ленинград партизанĕсен пĕр отрячĕ нимĕçсене икĕ ялтан хăваласа кăларнă та вара çав ялсене Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çитиччен хăйсен аллинче тытса тăнă.

* * *

Корсунь-Шевченковский районĕнче нимĕç эсэсовецĕсен «Викинг» ятлă танковăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ врач капитан Вальтер Михль çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн лазарет тата сурансене çыхмалли пункт Корсунь хулинче тăратчĕ. Февралĕн 1-мĕшĕпе 14-мĕшĕ хушшинчи вăхăтра пирĕн пата çăмăл аманнă 440 салтакпа офицер пычĕç. Йывăр аманнисем лазарета пачах лекмен. Эпĕ çакна пĕлетĕп: офицерсем, Гитлер приказне итлесе, йывăр аманнă нимĕç салтакĕсене пурне те перепере пăрахнă. Çавăрса илнĕ офицерсене нимĕç командованийĕ транспорт самолечĕсем çине лартса илсе тухма хăтланнă. Анчах та совет летчикĕсем çак ĕçе тума нумай кансĕрлерĕç. Вырăс истребителĕсем çĕр çинчен хăль çĕç вĕçсе хăпарнă 4 транспорт самолетне ман куç умĕнчех çунтарса ячĕç. Çав самолетсем çинче 100 офицера яхăн пулнă. Вĕсем пурте пĕтрĕç».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Полесье облаçĕнчи Камень хуторĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «1944 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен ушкăнĕ 2 танк çине ларса Камень хутора вăркăнса кĕрсе кайрĕç те хуторти мирлĕ халăха тискер асап кăтартрĕç. Ку хутора нимĕçсем 1943 çулхи çу кунĕсенчех пĕтĕмĕшпех çунтарса янă. Чĕррĕн тăрса юлнă çынсем чатăрсемпе землянкăсенче хĕсĕнсе пурăннă. Нимĕç танкисчĕсем пынă çĕртенех тупăсемпе, пулеметсемпе пеме пуçланă. Фашистсем никама та хĕрхенмен — стариксене те, карчăксене те, пĕчĕк ачасене те. Пĕр землянкăра Акулина Воскевичпа унăн 4 ачине вĕлернĕ, çав ачасенчен кĕçĕнни пĕр çулта пулнă, асли — 14 çулта. Тепĕр землянкăра Мария Сланевича, Анастасия Мартыновича, 14 çулхи Ольга Шевеле, 4 çулхи Леонид Шевеле, икĕ уйăхри Лора Шевеле тата ыттисене те вĕлернĕ. Хуторти хăшпĕр çынсем хутортан тарса тухма ĕлкĕрнĕ те вăрмана çитесшĕн пулнă. Вĕсене нимĕçсем хăваласа çитнĕ те пĕр хӳтлĕхсĕр çынсене нумайччен асаплантарнă. Хуторти çак акт çине алă пуснă тăватă çитĕннĕ çын тата икĕ пĕчĕк ача кăна нимĕç çынçиенĕсенчен пытанса юлма пултарнă. Совет боецĕсемпе командирĕсем Камень хуторне кĕнĕ хыççăн нимĕçсем тунă ытла та тискер ĕçсене курнă. Фашистсем вĕлернĕ совет гражданĕсен виллисем умĕнче эпир нимĕçсене пĕр хĕрхенмесĕр тавăрма тупа турăмăр».

Акт çине çаксем алă пуснă: гварди майорĕ Стецюра, гварди майорĕ Свердликов, гварди майорĕ Козлов, гварди красноармеецĕ Шишкин, хутор çыннисем — Кузьма Воскевич, Ирина Копылова, Наталия Мастич.

Хĕрлĕ Çар—Совет Союзĕн шанчăклă тĕрекĕ

I

Совет халăхĕ Хĕрлĕ Çар кунне виççĕмĕш хут ĕнтĕ Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче паллă тăвать. Çак тапхăрта Хĕрлĕ Çар мухтавлă çула утса тухрĕ, вăл хăй 26 çул тултарнине нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çапса аркатас ĕçре чаплă çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илет. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕсене Мускав тата Сталинград патĕнче аркатса тăкрĕ, вăрçă ĕçĕнче тĕпренех улшăну туса, Гитлерăн çарне пĕтсе ларасси патне пырса тăратрĕ.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладра çапла каланă: «...Пирĕн çарсем, иртнĕ çулта çапăçусем туса пырса, фронтăн центрти пайĕнче 500 километра çити тата кăнтăрта 1300 километра çити малалла кайрĕç, пĕр миллион тăваткăл километра çити территорие, урăхла каласан, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ Совет çĕрĕн 2/3-мĕш пайне çити ирĕке кăларчĕç, çак вăхăтра тăшман çарĕсене Владикавказран пуçласа Херсон патне, Элистăран пуçласа Кривой Рог патне, Сталинградран — Киев патне, Воронежран—Гомель патне, Вязьмăпа Ржевран — Оршапа Витебск сывăхĕнчи вырăнсем патне çити сирсе ыватнă».

Нимĕçсем Днепр çинче чарăнса тăма шутланă, анчах та Хĕрлĕ Çар гитлеровецсен çавăн пек шухăшĕсене те таптаса тăкрĕ. Пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, фронтăн чылай участокĕсенче Днепр урлă каçса, 300—400 километра çити малалла кайрĕç, Украинăпа Белоруссин пысăк область центрĕсене чылайĕшне ирĕке кăларчĕç, тăшманăн Никопольрайонĕнчи плацдармне пĕтерсе тăкрĕç. Кăçал январь уйăхĕн варринче Ленинградпа Волхов фрончĕсен çарĕсем наступлени пуçарса ярса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пысăк çухатусем кӳчĕç. Историллĕ пахха задачăна — Ленинграда тăшман блокадинчен тата тăшман артиллерирен варварла персе тăрассинчен пĕтĕмпех хăтарас задачăна кĕске вăхăтра пурнăça кĕртнĕ. Вырăссен авалхи хулине — Новгород хулине те нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе Гитлерăн çарĕсем хĕвеланăçнелле чакнăçемĕн чакса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă ывăлĕсене пирĕн чаплă партизансем ывăнма пĕлмесĕр пулăшаççĕ. Вĕсем, тăшман тылĕнче нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçса, вĕсене пысăк çухатусем кӳреççĕ. Нимĕçсем хăйсем поражени тӳснине, фронт линине кĕскететпĕр тесе калаççа, тĕрлĕ суя сăмахсемпе вилме пиккенеççĕ. «Анчах, халăх калашле, «кĕскетĕн те каялла таврăймăн». Антив. «кĕскетчĕр», «пĕчĕклетчĕр». Пирĕн çарпа халăх çакна ĕненсе тăраççĕ: гитлеровецсем фронта кĕскете-кĕскете ăна çак таранах çитерĕç: нимĕç çарĕшĕн фронтăн чи кĕске линийĕ Берлин ларакан Шпрея шывĕ тăрăх пулĕ» (А. Щербаков).

II.

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе нимĕçсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Октябрьти революци 25 çул тултарнипе 26 çул тултарнă хушăра нимĕçсен фашистла çарĕ Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи çапăçусенче 4 миллион салтакĕпе офицерне ытла çухатрĕ, вĕсенчен пĕр миллион та 800 пин çынран кая мар вилсе пĕтнĕ. Çав тапхăрта гитлеровецсем 14.000 ытла самолет, 25.000 ытла танк тата 40.000 кая мар тупă çухатнă. Нимĕçсем тӳсекен çухатусем кунран-кунах ӳссе пыраççĕ. Кăçалхи январĕн 14-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче кăна Ленинград патĕнче вĕсем, вилнисене çеç шутласан та, 40.000 салтакпа офицер ытла çухатнă.

Отечественнăй вăрçăн историне Украинăри иккĕмĕшпе пĕррремĕш фронтсен боецĕсемпе командирĕсем çĕнĕ чаплă страница çырса хучĕç. Вĕсем тăшманăн Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре тăракан группировкине çавăрса илсе пĕтерсе тăкрĕç. Çапăçу хирĕсенче тăшманăн 55.000 вилли выртса юлнă. Тыткăна 18.200 çын парăннă. Нимĕç захватчикĕсен 8-мĕш çарĕн татах тепĕр 10 дивизийĕпе пĕр бригади пĕтсе ларчĕç.

Пирĕн çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленчĕ, хăйĕн мастерлăхне ӳстерсе пычĕ. Вăрçăн пĕтĕм ĕçĕсем совет стратегийĕпе тактики малта тăнине, пирĕн çарсем пултарулăхпа мораль тĕлĕшĕнчен малта тăнине кăтартса параççĕ. «Хĕрлĕ Çар, — тенĕ Сталин юлташ, — хальхи тапхăрти чи хăватлă та çапăçура пиçĕхнĕ çар пулса тăчĕ». Çакна ăна Хĕрлĕ Çар Днепр шывĕ урлă каçни тата Ленинград фронтĕнчи çарсем пысăк çĕнтерӳсем туни уйрăмах витĕмлĕн кăтартса параççĕ. Хĕрлĕ Çар совет воинĕсен наступленири хастарлăхне тăшманăн нимĕнле оборони те чăтса тăма пултарайманнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕ.

Пирĕн халăх хăйĕн ывăлĕсен — салтакĕсемпе офицерĕсен тата генералĕсен хăюллă паттăрлăхне пысăка хурса хаклать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет правительстви орденсемпе медальсем парса пĕр миллион çурă çынна ытла наградăланă. Боецсемпе офицерсене темиçе пин çынна Совет Союз Геройĕн ятне панă. Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн кăна боецсемпе командирсене 2000 çынна яхăн Совет Союз Геройĕн ятне панă. Хĕрлĕ Çар чăнах та массăллă геройлăхăн çарĕ пулса тăчĕ.

СССР Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ союзлă республикăсенче çар формированийĕсем тăвасси çинчен тата çавна май Оборона Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă Комиссариатран союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен йышăннă решенисем Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсемпе Совет государствин хăвачĕ ӳссе пыни çинчен калаççĕ. «Республикăсен çар чаçĕсене туни,— тенĕ Молотов юлташ Сессире тунă хăйĕн докладĕнче,—пирĕн Хĕрлĕ Çара, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе тăракансене, тата Совет Союзĕн шанчăклă тĕрекĕ пулса тăракансене, малалла тĕреклетсе пыма тивĕçлĕ. Совет Союзĕн тăшманĕсем иккĕленмесĕр тăма пултараççĕ, мĕншĕн тесен, Хĕрлĕ Çара çакнашкал çĕнĕлле йĕркеленипе пирĕн государствăн вăйĕсем татах та ытларах тĕреклĕнĕç. Çакă вара вĕсене малашне сыхланарах пурăнма хушĕ. Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çапла çĕнĕрен тĕрекленни пирĕн çĕршыва хĕвелтухăçĕнчи тата хĕвеланăçĕнчи халăхсем умĕнче хăйĕн авторитетне малалла татах та ӳстерсе пыма пулăшĕ».

III.

Хĕрлĕ Çар мухтавлă çула утса тухрĕ. Пĕтĕм Европăри вăйсем тенĕ пекех пулăшса тăракан фашистла Германи урса кайсах хĕснине Хĕрлĕ Çар тӳссе ирттерчĕ. Фашистсем пирĕн çине кĕтмен çĕртен тапăннине пăхмасăр, тăшманăн вăрçă опычĕ пулнине пăхмасăр тата унăн техника, уйрăмах танксемпе самолетсем нумайрах пулнине пăхмасăр, совет воинĕсем Тăван çĕршыва хӳтĕлеме паттăррăн тухрĕç, йывăр çапăçусенче Октябрьти революцире çĕнтерсе илнисене сыхласа хăварчĕç.

Ирĕке юратакан этемлĕх Одессăпа Севастополе хăюллăн хӳтĕленĕ кунсене, Мускав çывăхĕнче тата Сталинград патĕнче пулнă çапăçусене нихçан та манмĕ. Хĕрлĕ Çар гитлеровецсен пусмăрне хирĕç кĕрешекен пĕтĕм тĕнчери халăхсен юратăвне тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл, паттăррăн çапăçса, нимĕçсен фашистла çарĕ никам çĕнтерейми çар пулса тăрать текен юмаха пăрахăçа кăларчĕ, хамăрăн союзниксене Африкăра çĕнтерӳ тума тата Италие кĕрсе кайма пулăшрĕ. Совет государствин тата унăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕн тĕслĕхĕ Европăри пусмăра кĕрсе ӳкнĕ халăхсене гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешме хаваслантарать. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем демократиллĕ державăсен Гитлера хирĕçле коалицине çирĕплетме май пачĕç тата Совет Союзĕн авторитетне пĕтĕм тĕнче умĕнче çĕклеме пулăшрĕç.

Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсем, чи малтан, пирĕн боецсемпе командирсем хамăрăн Тăван çĕршыва çулăмлăн юратнинчен килеççĕ. Вĕсем çакна пĕлсе тăраççĕ: хальхи вăрçă таса та тĕрĕслĕхлĕ вăрçă, хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан вăрçă. Çавăнпа та вĕсенчен кашниех нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре пĕтĕм вăй-халне пама хатĕр.

Паттăр Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршыва пусмăра кĕртсе ӳкерме хапсăнакан ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç пынă хаяр кĕрешӳсенче çуралнă.

1918 çул пуçламĕшĕнче нимĕç çарĕсем Украинăна çĕмĕрсе кĕнĕ, Псков тата Нарва хулисене тытса илнĕ, Питĕр хулине пырса кĕрессипе хăратса тăнă. Ун чухне çамрăк совет республики умĕнче питех те пысăк хăрушлăх пулнă. Ленинпа Сталин чĕннипе, рабочисемпе хресченсем, алла хĕçпăшал тытса, тăшмана хирĕç çапăçма тухнă. Совет çарĕсен отрячĕсем февралĕн 23-мĕшĕнче Нарвăпа Псков хулисем патĕнче нимĕçсен мухтаса пĕтернĕ дивизийĕсене пуçĕпех çапса аркатнă. Çав кун вара Хĕрлĕ Çар çуралнă кун шулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çар хаяр çапăçусенче белогвардеецсене çĕмĕрсе тăкнă, ют çĕршыв интервенчĕсене хăваласа кăларнă, Тăван Совет çĕршывĕн чысĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварнă.

Совет халăхĕ мирлĕ строительство çулĕсенче, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, хăватлă промышленность тата малта тăракан ялхуçалăхĕ туса хучĕ. Вăл Хĕрлĕ Çара малта тăракан техникăпа хĕçпăшаллантарассишĕн куллен ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ, совет воинĕсен кадрĕсене пăхса ӳстернĕ.

Халĕ ĕнтĕ пурте кураççĕ, Хĕрлĕ Çар совет халăхĕн шанăçне тӳрре кăларчĕ, вăйлă та хаяр тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Совет Союзĕн хăватлă тĕрекĕ пулса тăчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăхсем, вĕсем хăйсем мĕнле наци пулнине тата мĕнле тĕн тытнине пăхмасăр, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пĕр çын пек пулса çĕкленчĕç. Фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсем, боеприпассем, тумтирсем, колхозниксем — апат-çимĕçсем парса пулăшаççĕ. Совет интеллигенцийĕ, çар техникине лайăхлатса пырса, наукăпа культурăна малалла аталантарса, хăйĕн ĕçĕпе тăшмана çĕмĕрсе тăкма пулăшать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисене пăхмасăр, çĕнĕ те çĕнĕ домнăсем, прокатнăй стансем, рудниксемпе шахтăсем, электростанцисем тата чугун çулсем ĕçе кĕреççĕ. Халăх нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи промышленноçпа ялхуçалăхне юсаса йĕркелет. «Çĕнтерӳ пĕнех çапла калама пулать, — тенĕ Сталин юлташ, — совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихçан курман паттăр ĕç тунине кăтартса историе кĕрсе юлать».

Хĕрлĕ Çар Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, ӳссе çирĕпленнĕ. Парти хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене фронтăн татăклă участокĕсене янă, вĕсем вара хăйсен паттăрлăхĕпе боецсене тăшмана хирĕç кĕрешме хавхалантарса пыраççĕ. Нумай пин воинсем атакăна кĕрес умĕн çапла калаççĕ: «Эпĕ вилсен, мана коммунист тесе шутлама ыйтатăп», теççĕ. Çак сăмахсемпе совет çыннисем нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан пĕтĕм халăх кĕрешĕвне хавхалантарса тата организацилесе пыракан большевиксен партине вĕçĕмсĕр юратнине каласа параççĕ.

Большевиксен партийĕ тата Совет правительстви фронтра çапăçакан воинсен çемьисемшĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. «Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем,— тенĕ Щербаков юлташ, — хăйсен çемьисемшĕн Совет государстви тăрăшнине кураççĕ. Вĕсем Совет влаçĕ хăйсен тăван влаçĕ пулса тăнине, çав власть вĕсен арăмĕсемпе ачисене, ашшĕсемпе амăшĕсене нимĕç ирсĕрĕсем аркатнă хуçалăха юсаса йĕркелеме пулăшассине пĕлеççĕ. Пирĕн çарсен шухăш-кăмăлĕсем питĕ лайăх пулнин сăмавĕсенчен пĕри çакăнтан килет те ĕнтĕ».

* * *

Вăрçă халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕçленесси патнелле пырать. Анчах та пирĕн Совет государствине тăвакан тата Хĕрлĕ Çара организацилекен аслă Ленин кăтартса панисене асра тытмалла: «Пĕрремĕшĕнчен — çĕнтерӳсемпе лăпланса мухтанса лармалла мар, иккĕмĕшĕнчен — тунă çĕнтерĕве çирĕплетмелле, виççĕмĕшĕнчен — тăшмана пуçĕпех пĕтерсе тăкмалла».

Умра пысăк йывăрлăхсемпе хаяр çапăçусем тăраççĕ-ха. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсемшĕн ответ тытассине кая хăварас тесе урса кайсах çапăçĕç, туртса илнĕ Совет çĕрĕн кашни утăмне хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшĕç. Тăшмана тĕппипех çĕнтерес тесен,—вĕрентет пире Сталин юлташ, — совет халăхĕ фронтра та, тылра та — фабрикăсемпе заводсенче, колхозсенче, МТС-сенче, чугун çул çинче, лабораторисемпе рудниксенче çĕнĕрен ытларах вăй хурса ĕçлени кирлĕ.

Сталин юлташ пирĕн çарсене хăйсен мастерлăхне кунран-кун ӳстерсе пыма, тăшмана çĕнтерес ĕçĕн интересĕсем ыйтнă пек çĕмĕрсе пыма вĕрентет.

Сталин юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкĕ, пирĕн тĕрĕс ĕç татăклăн çĕнтерĕ.

Генерал-майор И. ФОМИЧЕНКО.

XVII ĕмĕрти паллă мар пулнă алçырăвĕ

Нумаях пулмасть государство архивĕсен управленийĕ XVII ĕмĕр варринче алăпа çырнă, ку таранччен паллă мар пулнă сборнике тупнă. Çак сайра-хутра çеç тĕл пулакан кĕнекен хуплашкине юман хăмаран тунă, ăна çиелтен сăранпа сыпăçтарнă. Кĕнекере 192 листа.

Алçырăвĕнче «Çĕнĕ летописецăн» пĕтĕм текстне кĕртнĕ. Тата Киевски Аслă Владимир князе шыва кĕртнĕ вăхăтран пуçласа1643 çулччен çырса пынă кĕске çырусем 100 шутланаççĕ.

«Пăтрануллă вăхăт» (1606—1612 çулсем) çинчен çырса хунисем питĕ интереслă вырăнсем пулса тăраççĕ. Çак çулсем çинчен çырса кăтартнă сыпăксем варăмрах тата вĕсем алçырăвĕн тĕп пайĕ пулса тăраççĕ. Ятсăр летописец пире геройла мăнасаттесем çинчен—Минин тата Пожарский çинчен, вырăс халăхĕ ют çĕршыв интервенцийĕпе мĕнле кĕрешни çинчен çырса кăтартать.

(ТАСС).

Ют çĕршывсенче

США-ра ХĔРЛĔ ÇАР 26 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ УЯВЛАМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 19-мĕшĕ (ТАСС). США-ри обществăллă организацисем нумайĕшĕ пĕтĕм çĕршывĕпех Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнине уявласа ирттерме хатĕрленеççĕ. Америкăпа Совет Союз туслăхĕн Национальнăй Совечĕ февралĕн 27-мĕшĕнче Нью-Йорк хулинче митинг туса ирттерет. Ку митингра сенатор-демократ Мэррей (Монтан штатĕнчен) сăмах тухса калать. Национальнăй Совет ытти нумай хуласенче те митингсем туса ирттерме шутлать. Киноактерсен «Америкэн Систер Уинг» ятлă организацийĕ Хĕрлĕ Çар кунне çапла паллă туса ирттерме хатĕрленет: салтаксемпе моряксем пухăнакан мĕнпур клубсенче те киноактерсен организацийĕн членĕсем мĕн те пулин лартса параççĕ. Ку организацин членĕсем Совет Союзĕн гимнне, красноармеецсен юррисене юрласа параççĕ тата çавăн пекех Хĕрлĕ Çар ячĕпе уйрăм номерсем пулаççĕ.

Совет Союзне çак вăрçăра пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет çапла пĕлтерне: февралĕн 23-мĕшĕнче комитет «Колумбия» ятлă радиосаракан компанийĕн станцийĕсем урлă вырăс çарĕн театрсем валли çырнă историне парать. Хĕрлĕ Çар кунĕнче комитет çавăн пекех Совет Союзĕн çар плакачĕсен ятарласа тунă выставкине уçать. Америкăпа Совет Союз туслăхĕн Национальнăй Совечĕ çапла пĕлтернĕ: февралĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен хи вăхăт хушшинче «Виктори» йышши çĕнĕ суднăна шыва антараççĕ. Ку суднăна «СССР çĕнтерĕвĕ» тесе ят панă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНПА ЛЕЙПЦИГ ХУЛИСЕНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питех те пысăк вăйĕсем Лейпциг хулине тапаннă. Хула çине 2.300 тонна ытла бомба пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă.

«Москито» йышши самолетсем Берлин хулипе хĕвеланăç Германири ытти чылай облаçсем çине бомбăсем пăрахнă.

Çак мĕнпур операцисенчен акăлчансен 79 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Лейпциг хули çине кунччен Англи бомбардировщикĕсем 1943 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тапăннă пулнă. Ун чухне вĕсем ку хула çине 1.500 тонна бомба пăрахнă.

Америка бомбардировщикĕсем пали ирхине Германипе Голландири çар об'екчĕсене тапăннă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ЭНИВЕТОК УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ АННИ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Америка армийĕн ударлă çарĕсем, тинĕс пехотин чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Эниветок утравĕсем çине (Маршаль утравĕсем) аннă та кĕпер умĕнче укрепленисем туса хунă.

Десантсем антаричченçав утравсем çине авианосецсем çинчи самолетсем вĕçсе пыра-пыра бомбăсем пăрахнă, тата карапсем çинчи артиллери пенĕ.

Çавсем анса ларас ĕçе тинĕс авиацийĕн самолечĕсем хӳтĕлесе тăнă тата линкорсем çинчи тупăсем вăйлăн персе пулăшнă. Çак утравсем çине аннă çарсене Тарнер контр-адмирал ертсе пырать.

Бисмарк архипелагĕ çинчи Японии çарĕсене пулăшу пырса пама хăтланнă японецсен суднисене Америка авиацийĕ çаплах атакăласа тăнă. Японецсен 7.500 тонна таякан пĕр танкерне, кашни 2.000 тонна таякан 5 грузовой суднине тата 2 корветне шыва путарнă.

ВАШИНГТОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем японецсен Энгебири сывлăш-çар базине тата Эниветок утравĕсен çурçĕр пайĕнче (Маршаль утравĕсем) ытти темиçе утрава йышăннă. Американецсен çухатăвĕсем пысăк мар. Утрав çинчи операцисем малтан хатĕрлесе хунă планпах пулса пыраççĕ.

ХĔРЛĔ ÇАР КУНĔ ТĔЛНЕ ДОКЛАДСЕМПЕ ЛЕКЦИСЕМ ИРТТЕРМЕЛЛИ ТЕМĂСЕМ

1. Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарни.
2. Ленинпа Сталин—Хĕрлĕ Çара организацилекенсем тата унăн çулпуçĕсем.
3. Хĕрлĕ Çар тунă аслă çĕнтерӳсен çулталăкĕ.
4. Хĕрлĕ Çар вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсем.
5. Хĕрлĕ Çар — ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ.
6. Халăхăн мĕнпур вăйĕсене тăшмана хăвăртрах та пуçĕпех çапса аркатнă çĕре парар.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 00044